**Хальхи самана**

*1908-мӗш ҫулхи октябрӗн 28-мӗшне*

Ачаш кăна ачам пур,
Пӗртте хăпа пӗлмерӗ.
Апат ҫисе ларнă чух
Аран ҫилӗ килмерӗ.
«Ҫыру пӗлме, ҫын пулма
Ялти шкула яр-ха, – тет. –
Ҫыру пӗлни мӗн тума
Кирлӗ ҫынна, атте?» тет.
– Ачам, ачам, ан йӗтет,
Илтес кунта ху илтӗн,
Хут вӗренни уссине,
Хут вӗренсен, ху пӗлӗн.
Ҫитес ҫула ҫитсессӗн,
Пăртак ăс-пуҫ кӗрсессӗн,
Ярăп акă сана та
Ялти шкула ăс пухма.
Турă хушсан, ҫын пулсан,
Курăн Чӗмпӗр хулине.
Ентӗ, ачам, самана
Елӗкхи мар кучуне.
Елӗкчӗ вăл, ӗлӗкчӗ,
Урăх тӗслӗ ӗмӗрччӗ.
Тырă-пулă пит пулнă,
Тырă акма ҫӗр пулнă.
Ӗмӗр иртнӗ ӗҫ ҫинче,
Ӗҫ иртсессӗн – ӗҫкӗре.
Анчах тӗрлӗ хуйхă та
Пайтах пулнă-ҫке тата.
Тухатмăш та тухатать,
Юмăҫӗ те хăратать,
Асамҫăсем асаҫҫӗ,
Ача-пăчана пăсаҫҫӗ.

Вырăссем те вĕсене,
Ырă сунса, вĕрентме
Ачисене илеççĕ,
Ашшамăшне йĕртеççĕ.
Тарăхтарать таркăн та,
Вăрхурах та – вăрманта.
Тĕрлĕ усал-тĕселрен,
Тĕрлĕ усал чирсенчен
Чӳк кулленех тумалла,
Путек-сурăх пусмалла.
Куллен-кунах чӳк туни –
Хĕл-çăвĕпех хĕн курни.
Киреметре кĕлли пур,
Хăяматра хывни пур,
Кĕлтуса та килĕшмест,
Киремет те итлемест,
Турăсем те чӳксене
Илми пулчĕç кучуне.
Кун-çул пăсăлса кайрĕ,
Куç-пуç аташса кайрĕ:
Те тутара тухас-ха,
Те юталла тарас-ха.
Анчах ыр çын тупăнчĕ,
Самани те улшăнчĕ.
Урăх çулпа утрăмăр,
Урăх çĕре тухрăмăр.
Кунсăр пуçне чăвашсем
Мĕн пулĕччĕç халиччен?
Тутаралла тухĕччĕç,
Тутар тĕнне тытăччĕç
Е вырăса ерĕччĕç,
Пĕрерĕнех пĕтĕччĕç.
Ырă чăваш тупăнчĕ,
Ырă ĕçе тытăнчĕ.
Чăн чăвашла сăмахпа

Хăй тăванне чăваша
Пырса çапрĕ чĕрине,
Пăлхатса ячĕ чĕрене.
Пăлхатнинчен питĕрех
Шухăш ӳкрĕ пуç çине.
Çĕнĕ ĕмĕр мар-и çав?
Çĕнĕ пурнăç карĕ çав!
Пур çĕрте те ялсенче
Хура халăх хушшинче
Хут вĕренме тытăнчĕç,
Шкулсем нумай уçăлчĕç.
Вĕсен чĕри Чĕмпĕрте,
Аслă чăваш шкулĕнче.
Кĕнекесем çаптарчĕç,
Çын хушшине салатрĕç;
Кĕçке ĕнтĕ куçĕсем
Уçăлаççĕ чăвашсен.
Кĕçке курма пуçлареьç,
Тĕнче кура пуçларĕс.
Çав ĕçсене кам турĕ,
Çак таранччен тăрăшрĕ?
Çак таранччен тарăхса,
Чăвашсемшĕн тăрăшса
Кун-çулĕнче курнине,
Шухăшпала шурнинс
Кам каласа парĕ-ши?
Кам ырă ят сарĕ-ши?
Эй самана, самана!
Мĕн кăтартăн малалла?
Хальхи кунсем капла-ха,
Килес кунсем мĕнле-ши?
Пурăнатпăр хуллен çеç
Аслă çынсен ăсĕпе.
Вĕсем пире юратса,
Хăй шухăшне хăварса

Халăх ĕçне тăваççĕ,
Халăх хуйхипе çунаççĕ.
Ыра çынсем ыйтнине,
Кирек кама кирлине
Ялан пĕлсе тăраççĕ,
Юратайса тăваççĕ.
Анчах чăваш хушшинче
Чунĕ хытнă çынсем те
Тапаланма пуçларĕç,
Тăрса çапла каларĕç:
«Чаплă вырăн тупасчĕ,
Часрах улпут пуласчĕ».
Тĕрлĕ çутă тӳммешĕн
Тĕнки тухать ав лешĕн;
Чăвашла та калаçмасть,
Тăванне те астумасть:
Чĕри шăнса кайнă çав,
Чĕрĕ виле пулнă çав.

Çитменнине çын çине
Çитмен пурнăç çитрĕ çав
Йывăр кунсем килчĕçĕ,
Выçлăх çулсем çитрĕçĕ.
Çĕрĕ тăвăр, тыр ӳсмест,
Тăранма та çитеймест.
Выçă çăвар выçлăхне
Кил-картине кĕрсенех
Турчăкапа тухас та,
Сухалĕ çине сурас та,
Хăваласах кăларас,
Хапхаранах ăсатас).
Чăтаççĕ-ха чăвашсем,
Вĕçнех çитмен-ха вĕсем.
Ĕçкĕ-çикĕ тунă чух,
Ĕçсе-çисе ларнă чух,

Юррисене юрлаççĕ,

Куççулĕпе кулаççĕ.

Чăваш! сана ун чухне,

Чуну çĕкленнĕ чухне

Мĕн пит асна килет-ши?

Мĕн пит чунна хĕсет-ши?

Савăнăç-и, куççуль-и

Сан куçăнта куç тулли?

*Иванов, К. Хальхи самана : (1908-мĕш çулхи октябрĕн 28-мĕшне) // Иванов, К. В. Çырнисен пуххи / К. В. Иванов ; Г. Ф. Юмарт пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 2000. – С. 92-95.*